**Çĕмĕрле районне кĕрекен Юманай шкулĕнче ĕçлекен**
**Григорьева Зоя Аркадьевна**
**7-8- мĕш классенче ирттерекен класс тулашĕнчи ĕç**

## Ĕçĕн теми: «Ырă ĕçĕн çимĕçĕ те ырă»

## Тĕллевĕсем:

- ачасен астăвăмĕпе тимлĕхне, тавçăрулăхне, сăмах ăсталăхне аталантарасси; тавра курăмне ўстересси;
- ырăпа усала уйăрса илме, туслăха упрама, хаклама вĕрентесси

**Эпиграфĕсем***:* ***«Вăйă –вăйпала, ĕç – ĕçпеле»;***
***«Ăс тенине мĕн виличченен пухаççĕ»;***
***«Делу – время, а потехе – час»***
**Кирлĕ хатĕрсем:** проектор, компьютер, экран; карточкăсем

## Ĕçĕн йĕрки:

Вĕрентекен:

- Ырă кун пултăр пурне те! Паян эпĕ сирĕнпе тĕл пулма çав тери хавас. Эпир сирĕнпе **«Ырă ĕçĕн çимĕçĕ те ырă»** пысăках мар мероприятие ирттерĕпĕр. Мероприяти ытларах вăйĕ мелĕпе иртĕ. Сирĕн кăмăлсем мĕнлерех? Эпир сирĕнпе Пĕлў тĕнчине çул тытăпăр. Анчах та çул çинче тĕрлĕрен чарăнусем тума тивĕ. Тĕрлĕрен пăтăрмахсем сиксе тухма пултарĕç. Çавăнпа та пире çула тухма шанчăклă тус-юлташ кирлĕ. **«Туслăхра – вăй», -** теççĕ ваттисем.

*(Ачасене тупмалли юмахсене парăпăр. Тупсăмне пĕлекенсене кама сарă çăлтăр лекнĕ, вăл пĕр ушкăна лекĕ. Кама хĕрлĕ çăлтăр лекнĕ, вăл тепĕр ушкăна лекĕ. Ушкăнсен ятне, девизне тупмалла, капитанне уйăрмалла).*

### 1-мĕш чарăну «Тупмалли юмахсен арчи» («Шкатулка загадок»).

Вĕрентекен: - Мĕн ĕлĕкрен ватă çынсем пĕчĕк ачасен тавракурăмне, тавçăрулăхне аталантарас тесе тĕрлĕрен тупмалли юмахсем (загадки) шухăшласа тупнă. Эпир те вĕсен тупсăмне пĕлер. Вырăссем калашле, разминка туса илер.

1. Пĕр майран çĕр хут сараппан. Мĕн вăл? **(Сухан.)**
   *Никого не огорчает,*
   *А всех плакать заставляет.*
2. Вăрман урлă хура каччă курăп. **(Çĕмĕрт.)**

*Будто снежный шар бела,*
*По весне она цвела,*
*Нежный запах источала.*
*А когда пора настала,*
*Разом сделалась она*
*Вся от ягоды черна.*
**(Черемуха)**

3. Пĕчĕкскер, хитрескер, çĕр мăкăртса тухнăскер. ***( Кăмпа)***

*Под сосною у дорожки*
*Кто стоит среди травы?*
*Ножка есть, но нет сапожка,*

*Шляпка есть - нет головы.*
*(Гриб)*

4. Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă. ***(Măйăр)***
   *Это зелёный домишко,*
   *Откроешь зелёную дверь —*
   *Увидишь бурый домишко;*
   *Откроешь бурую дверь —*
   *Увидишь жёлтый домишко;*
   *Откроешь жёлтую дверь —*
   *Увидишь белый домишко;*
   *Откроешь белую дверь —*
   *А там сердечко, проверь!*
5. Пысăк хуранăн пăтти йӳçĕ. ***(Йĕкел).***
   *У матери тысяча сыновей,*
   *Каждому она мисочку дала,*
   *А себе не взяла.*
6. Упăшки ятлаçать, арăмĕ уй шăварать. ***(Аслатиллĕ çумăр.)***
   *Раскаленная стрела*
   *Дуб свалила у села.*
   (Молния)
7. Пӳрт тăрринче çур çăкăр. **(Уйăх)**

   *Увидав рожок над крышей,*
   *Ты его узнаешь вмиг,*
   *Если вечером повыше*
   *Задирать свой нос привык.*
8. Хура йăмăкăн юрри хитре. ***( Шăнкăрч)***
   *На шесте - дворец, во дворце - певец.*
   *(***Скворец)**
9. Икĕ амăшĕн пилĕкшер ача, пурте пĕр ятлă. ***(Пӳрнесем.)***
   *Пять братьев -*
   *Годами равные, ростом разные* **(Пальцы)**
10. Пĕр шăшин икĕ хӳре. ***(Çăпата.)*** *Из липы свито дырявое корыто*
11. Кукша пуç, тăвата куç. ***(Тӳме.)*** *Маленький Данилка на петельке висит*
12. Симĕс — вăрман мар, çаврака — çăкăр мар. ***(Çарăк.)***
    *Тянешь и тянешь, вытянуть не можешь.*

**2 –мĕш чарăну «Пĕлетĕр – и эсир?»**

Вĕрентекен: - Ачасем, эпир сирĕнпе хамăрăн тавçарулăха çивĕчлетрĕмĕр. Халĕ тавракурăма тĕрĕслер. Эпир сирĕнпе Çĕнĕ 2024 çула кĕтĕмĕр.

1. Аса илер-ха, 2023 çул Раççейре мĕн çулталăкĕ пулнăччĕ? Вĕрентӳçĕсемпе вĕрентекенсен çулталăкĕ. Чăваш Республикинче Телейлĕ ачалăх çулталăкĕ, Иван Яковлевич çулталăкĕ çулталăкĕ. Çапла – и? Халĕ сире ыйту, 2024-мĕш ***çула Раççейре тата Чăваш Енре мĕн çулталăкĕ тесе палăртнă?***
   ***Çемье çулталăкĕ (Год семьи).*** Чăваш Республикинче Экологи тата çут çанталăкпа тирпейлĕ усă курассин çулталăкĕ ***(Год экологической культуры и бережного природопользования в Чувашской Республике).***
2. 2024 çулхи çурла (август уйăхĕнче) Паллă чăваш поэчĕ Геннадий Айхи çуралнăранпа 90 çул çитет. Чăн хушамачĕ – Лисин. Патăрьел районĕнчи Çĕньял

ялĕнче çуралнă. Чăваш халăх сăвăçин, Раççейри тата Европăри тĕрлĕ çĕр-шыври литература премийĕсен лауреачĕн - Геннадий Айхин - «Çын тата сцена» сăввине вуланă эсир.

3. 2024 çулхи çурла (август уйăхĕнче) пирĕн республикăн тĕп хули Шупашкар йĕркелесе кайнăранпа 555 çул çитет. ***Шупашкар вырăсла мĕнле?*** Ячĕ мĕне пĕтерет-ши? 1) верси тĕрлĕрен: Шупашкар – икĕ пайран тăракан сăмах **(Шупаш тата кар) –** ***карса çирĕплетес, карман сăмахран*** тăрать. ***Чăваш карманĕ-крепоçĕ*** тенине пĕлтерет теççĕ.

2) ***Шупаш ятлă паттăр*** чăваш е чăваш кнеçĕ никĕсленннни çинчен каланă халап та пур.
3) Шу пош - Шыв пуçĕ, Шывпа кар т.ыт те.

2024- мĕш çулта палăртнă чи сумлă датăсенчен пĕри вăл - Çеçпĕл Мишши поэт çуралнăранпа чӳк (ноябрь) уйăхĕнче 125 çул çитни.

Çеçпĕл Мишши – поэт кĕрешӳçĕ кăна мар, хастарлă, хыт утăмлă, юриспруденцие лайăх пĕлекен, чи чаплă та ăста юрист, чăваш халăхне, чăваш чĕлхине чунтан юратакан çын пулнă. Халтан кайиччен ырми - канми ĕçленĕ, спортпа туслă пулнă, вут кайăкла «вĕçсе» çӳренĕ, Ревтрибунал председателĕ – хальхи пек Чăваш енĕн тĕп прокурорĕ, юстици пайĕн пуçлăхĕ – хальхи пек юстици министрĕ пулнă çын.

1922 çулхи июнĕн 15- мĕшĕнче Çеçпĕл Мишши пурнăçĕ вăхăтсăр таталнă. Çапла вĕçленнĕ юратнă поэтăмăрăн пурнăçĕ.

4. Шел пулин те, ĕмĕрĕ ытла та кĕске пулнă. Çепĕл Мишшин чăн ячĕ мĕнлерех пулнă-ши? ***(Михаил Кузьмич Кузьмин). Псевдонимсем: Михаил Сеспель, М. Забытый, Артур, Михаил Кузьмин, М.Сеспель.***

**3-мĕш чарăну «Асамлă уй»**

**Капитансен конкурсĕ.**

**-** Пĕлӳ çулĕпе утса пынă май чарăну туса илсен те пăсмĕ.

Малалла капитансене тĕрĕслер.

Акă сире **Логогрифсем:**

1. Тайгара мана эс тупăн,
Тирĕм хаклă ман.
Вĕçен кайăк эпĕ пулăп
Мала **А** лартсан**.** ***(кăш-акăш)***

2. Вĕлтĕр вĕçсе хупăрлатăп
Çĕре шурă шупăрпа.
Хыçа сас пали лартсассăн
Вĕçĕп янкăс сасăпа. ***(юр-юрă)***

2. Океанра ишетĕп вирлĕ,
Хуса çитеймĕн эп тарсан.
Хĕçрен хӳтĕленме эп кирлĕ
Пĕр сас палли улăштарсан**.**
***(кит-щит)***

3. Тума палăртнă ĕç пулăп
**Н** сăмах вĕçне лартсан.
Çумăр çунă чух мана эс тăхăн
Сас палли улăштарсан.
***(план-плащ)***

4. Савăт-сапа хупăлчи эп
Е аш касан ман çинче.
Çулçăллă йывăç пулатăп –
Сас палли улăштарсан.
***(ывăс-ăвăс)***

**Метаграммăсем:**

1. Хыçра манăн **Н** тăрсан
Эпĕ ӳсĕп вăрманта.
**Х** – пала улăштарсан
Мана вулăн кăмăлтан ***(юман-юмах)***

**Метаграммăсем:**

1. Ӳт-пӳ пайĕ эп **Л**-па пулсан,
Пур ĕçе тăватăп яланах.
**Л** вырăнне **Т** лартсан
Пылчăкра эс тăхăнан мана**.** ***(алă-атă)***

2. **Т**-па пулсан эп тыр-пул,
**К**-па ялан хаваслă,

**П**-пала шыври чӗр чун,
**В**-пала эп йывӑç пайӗ.
Хуçнӑ турат **Х**-пала,
**С**-пала шыв çийӗн ишӗп.
(***тулӑ-кулӑ-пулӑ-вулӑ-хулӑ-сулӑ)***

3. Эпӗ килти кайӑк-кӗшӗк,
Мамӑк тӗкӗм сан валли.
Симӗс лӑсӑ – манӑн кӗрӗк –
Улӑштар çеç сас палли***. (хур-хыр)***

4. «Паян» хыççӑн эп çӳретӗп,
Эс кӗтен мана ялан.

Çулла уйра çитӗнетӗп
Сас палли улӑштарсан.
**(ыран-ыраш)**

5. **О**-па пулсан – урай сӑрлатӑн,
Пахча çимӗç **Ы**-па пулсан.
**(охра-ыхра)**

**4 – мӗш чарӑну «Кайри мала!»**

Вӗрентекен: **-** Малалла блиц – опрос ирттерӗпӗр. Кая юлнӑ ушкӑнӑн мала тухма шанчӑк пур. Кайрӑмӑр. Малтан чӑвашла ыйтусем, унтан вырӑсла пулӗç. Ответсене хӑвӑрт памалла.

1. Чӑваш Республикин пуçлӑхӗ кам вӑл? **(Олег Алексеевич Николаев)**
2. Чӑвашсене çутта кӑлараканӗ ***(просветитель чуваш)*** **(Иван Яковлевич Яковлев).**
3. Чӑвашсен пӗрремӗш космонавчӗ **(Андриян Григорьевич Николаев).**
4. Пирӗн республикӑри чи ватӑ тата чи çамрӑк хуласем **(Шупашкар, Çӗнӗ Шупашкар)**
5. Вӑрман тухтӑрӗ мӗн ятлӑ? (**улатакка)**
6. Ячӗ утмӑл, хӑй пӗччен **(утмӑл турат чечекӗ)**
7. 2024 çул чӑвашсемшӗн мӗнле çул терӗмӗр? (Чӑваш Республикинче Экологи тата çут çанталӑкпа тирпейлӗ усӑ курассин çулталӑкӗ ***(Год экологической культуры и бережного природопользования в Чувашской Республике).***
8. Шупашкар хули миçе çул тултарать терӗмӗр? **(555 çул)**
9. Чӑвашсен пӗрремӗш хаçачӗ **(«Хыпар»)**
10. «Нарспи» поэма авторӗ **(Константин Иванов)**

*КТО ИЗ ЛИТЕРАТУРНЫХ ГЕРОЕВ…*

1. …проник в дом врага своего в качестве учителя-француза…***(Дубровский)***
2. …выпросил у царицы черевички для любимой…***(Кузнец Вакула)***
3. …сгорел заживо***…(Тарас Бульба)***

*КОМУ ПРИНАДЛЕЖАТ СЛОВА?*

1. …Есть ещё порох в пороховницах**…(Тарас Бульба)**
2. …Кто бы мог думать, что человеческая пища в первоначальном виде летает, плавает и на деревьях растёт**…(Генерал)**

.3***. Какому литературному жанру присуще наличие морали?***
а) сказке;
б) рассказу;
**в) басне.**

2. ***Кто автор слов «Сказка ложь, да в ней намек, добрым молодцам урок»?***
а) Некрасов;
б) Крылов;
**в) Пушкин.**

***3. С чего начинается сказка?***
а)с концовки;

**б)с зачина;**
в) с намека.

**5 – мĕш чарăну «Ырă ĕçĕн çимĕçĕ те ырă»**

Вĕрентекен: - ***«Икĕ ăс аван, виçĕ ăс тата аванрах»,*** - теççĕ ваттисем. Паян эпир хамăрăн пĕлĕве тĕрĕслерĕмĕр, тавракурăма ӳстертĕмĕр. Тен, мĕн те пулин çĕннине пĕлтĕмĕр. Ырă ĕçĕн çимĕçĕ те ырă пулмалла. Халĕ пĕтĕмлетӳ тума та юрать.

*Ушкăнсем миçе балл илме пултарнине шута илсе çĕнтерӳçĕне палăртăпăр.*

- Çакăнпа пирĕн паянхи тĕл пулу вĕçленет. Пурне те пысăк тав.